«Каллех çав тунсăх, юрату...»

Опять тоску, опять любовь
В моей душе ты заронила...
***А. Кольцов***

Каллех çав тунсăх, юрату...
Каллех эп хăр турат пек тăлăх...
Вут евĕр чупрĕ сан яту
Ăс-пусăмпа ÿт-пĕвĕм тăрăх.

Пурнăçланман ĕмĕтĕмсен
Тăпри çинче тăмашкăн йывăр.
Асаилÿ сĕлĕхĕсем,
Тархасшăн,
ан вăранăр, çыврăр!

Çук. Тăрăнчĕç тÿрех чуна.
Тĕнче тапранчĕ мана хирĕç.
Кала, чиперĕмçĕм, мана:
Çав мĕлкесем чăнах эпир-и?

Пĕлтер: сар уйăх çутинче
Шур кăкăрна чуптăваканĕ,
Сана вилсе ыталаканĕ
Эпех-и, е ку – тĕлĕк çех?

«Мĕнле-ха мансăрăн?» – тесе
Пăшăрхану куççулĕ витĕр
Ăсатаканĕ кам-ши?
Çитĕ!
Палларăм, чунăм: вăл – эсех!

...Сикет кун-çулăн урхамахĕ.
Çĕр кукалет, турта хуçать.
Пулнишĕн айăплă хамах-и,
Е кăшт сана та çыпăçать?

Халь пурпĕрех. Анчах та темшĕн
Çак мĕскĕн уйăх айĕнче
Ун чухнехи хитре кунсемшĕн
Хуллен хÿхлет пек çут тĕнче.

Йĕретĕп эпĕ те – мĕн тăвăн? –

Кунсем иртеҫ, ҫулсем иртеҫ.
Шăпу халь санăн урăх, хăвăн,
Ҫĕн шухăш – кăмăл илĕртет.

Эп хам та мал аллах пăхатăп, –
Анчах та тахăш сехетре
Килетĕн те – пуҫа усатăп,
Ҫӳретĕп тĕксĕм инҫете.

Вара каллех эп тăлăх, тăлăх,
Каллех ҫак тунсăх юрату...
Чупать чĕре талккишĕ тăрăх
Нихҫан та сӳнмесле яту.

*Айташ, Ю. «Каллех ҫав тунсăх, юрату...» / Ю. Айташ // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 404.*